26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
21
ЫРСАРНИКУН
230(6467) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕТĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, вирлĕн наступлени туса пырса, ноябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле ПОЛЕСЬЕ енче паха чугун çул тĕвви пулса тăракан ОВРУЧ хулине тытса илнĕ.

ОВРУЧ хулине тытса илессишĕн пына çапăçусенче ПУХОВ генерал-лейтенантăн çарĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах РУМЯНЦЕВ генерал-майорăн 4-мĕш гвардейски сывлăш десант дивизийĕ чапа тухнă.

Тунă çитĕнĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, 4-мĕш гвардейски сывлăш десант дивизине „ОВРУЧСКИ" тесе ят парас, вара малашне ăна çапла чĕнмелле тăвас:

4-мĕш гвардейски Овручски сывлăш десант дивизийĕ.

Паян, ноябрĕн 19-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ ОВРУЧ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене, çĕрçирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хутчен пĕр харăс персе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă çапăçнăшăн ОВРУЧ хулине ирĕке кăларнă çарсене ТАВ ТАВАТĂП

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕ.

Колхозлă ял фронта ытларах та ытларах пулăшать

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă доклада колхоз хресченĕсем, пĕтĕм совет ĕççыннисем пекех, тулли кăмăлпа хавасланса кĕтсе илчĕç.

«Совет Союзĕнчи хресченсем, — тенĕ Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче, — кая юлнă ялхуçалăхне мирлĕ строительство çулĕсенче колхоз стройĕ çине таянса малта пыракан ялхуçалăхĕ туса хунăскерсем, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хăйсем пĕтĕм халăх интересĕсене тăрăнăн ăнланса тăнине ял историйĕнче нихăçан пулман пек кăтартса пачĕç. Вĕсем, фронта пулăшассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлесе, нимĕçсене хирĕç пыракан хальхи вăрçа совет хресченĕсем хăйсен тăван ĕçĕ, хăйсен пурнăçĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçă тесе шутланине кăтартса пачĕç».

Колхоз хресченĕсем патриотла туйăмпа ĕçлесе, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара апат-çимĕçсем, промышленноçа — чĕртаварсем кирлĕ таран парса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи колхоз хресченĕсен аслă çемьинче пулса, пирĕн Ленин орденлĕ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем те хăйсен тивĕçне ялан çÿлте тытса тăраççĕ. Республикăри колхозсем иртнĕ çулта, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ. Кăçалхи çул республикăри колхозсем татах та пысăкрах çитĕнÿсем турĕç. Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ, государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Республикăна кăçал та ялхуçалăх енĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă.

Колхоз хресченĕсем хăйсен çĕршыв умĕнчи тивĕçĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе чаплă çитĕнÿсем турĕç. Анчах та совет ĕççыннисем, тесе вĕрентет Сталин юлташ, тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармА, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанма вĕренмен. Аслă çулпуç хăйĕн халăхне, Хĕрлĕ Çара çапла калать: «Çĕнтерÿ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ».

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татах та хастарлăраххăн кĕрешме аслă çулпуç сăмахĕсем колхоз хресченĕсене çĕнĕ вăй-хăват параççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ умĕнче фронта пулăшассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме тупа тăваççĕ. Республикăри колхозсенче халĕ ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлесе çитерессишĕн, çуракине тĕплĕн хатĕрленессишĕн, государство умĕнчи пур обязательствăсене те тултарассишĕн социализмлă ăмăрту çĕнĕ вăйпа саралса пырать.

Колхозниксемпе колхозницăсем — Тăван çĕршывăн сумлă патриочĕсем фронтшăн, çĕнтерÿшĕн пулсан нимĕн те шеллемеççĕ. Вĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарнă хыççăн çитес çулшăн тырă пама пуçларĕç. Халĕ республикăри колхозсем хăйсен хуçалăхĕнчи перекетлесе усранă тырпула государствăна сутма тытăнчĕç. Ĕнер Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз колхозникĕсем государствăна, хĕрлĕ обозпа кайса, 792 пăт тырă сутнă. Кашни çĕнĕ кун колхозниксен çавăн пек патриотла чаплă пуçарăвĕсем çинчен калакан хыпарсене ытларах та ытларах илсе килет.

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсем государствăна 8.400 пăт тырă сутма йышăннă. Вăл колхозри колхозниксем хăйсен тыррисене государствăна сутаççĕ, çапла колхоз председателĕ Гаязов юлташ 50 пăт, колхозниксем Салахиев 35 пăт, Алеев 15 пăт сутма пулнă. Калинино районĕнчи Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз 10.000 пăт, Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз 3.000 пăт, Кÿлхĕрринчи «Трактор» колхоз 8.000 пăт сутнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем перекетленĕ тырра государствăна сутса хăйсем тăван çĕршывпа мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн кирлисене пурне те парса тăма хатĕр пулнине тата хамăрăн тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн юратнине кăтартса параççĕ. Вĕсем, хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутса, нимĕç захватчикĕсене хамăрăн çĕршывран хăвăртрах хăваласа кăларма пулăшаççĕ.

Колхозлă ял çавăн пек пархатарлă туйăмпа ĕçлесе пурăннă вăхăтра партипе совет организацийĕсемшĕн колхозниксен патриотла пуçарăвне çĕклентерсе пырассинчен ытларах хисеплĕ задача урăх пулма та пултараймасть. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса парса, фронта пулăшассишĕн татах та ытларах вăй хурса кĕрешме хавхалантарса пымалла. Кашни колхозникпе колхозница Сталин юлташ колхозниксен ĕçне мĕнле хаклани çинчен пĕлсе тăтăр. Кашни колхозникпе колхозница Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи хăйĕн тивĕçне ăнланса илтĕр.

Иккĕленмелли çук, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем государствăна тырă сутас тĕлĕшпе те хăйсен пысăк активлăхне кăтартса парĕç. Кăçал республикăри колхозсем тухăçлă тырпул туса илчĕç. Çав тырпула перекетлĕн тыткаласан, çимелĕх те, государствăна сутмалăх та пур. Апла пулсан кашни колхозник хăйĕн хуçалăхĕнче перекетленĕ тырпула государствăна сутма пултарать.

Колхозниксемпе колхозницăсем çĕнтерÿ çывăххи çинчен лайăх пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем фронта ытларах та ытларах пулăшассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Колхозлă ялăн пĕтĕм вăй хăватне фронта пулăшма, нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма парар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем вирлĕн наступлени туса пырса, ноябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле ОВРУЧ хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ. Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче — КАРПИЛОВКА, ОТЫЧАНКА, ЛУБЯНКА, ДУБРОВА, МАРТЫНОВИЧИ, ВОРОВИЧИ, КОВШИЛО, НОВАЯ ДОРОГИНЬ, СТАРАЯ ДОРОГИНЬ, КАЦОВЩИНА, ЛАСКИ, РАКОВЩИНА ялĕсене.

ЧЕРКАССЫ хули енче пирĕн çарсем ДНЕПР урлă ăнăçлă каçнă та тăшмантан ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи вăйлă çирĕплетнĕ ЕЛИЗАВЕТОВКА, БУДИЩЕ, СВИДОВСК, ДАХНОВКА, ВАСИЛИЦА, СОСНОВКА, ГЕРОНИМОВКА ятлă тĕреклĕ пунктсене тытса илнĕ, тăшман чăсĕсене малалла хĕссе пырса, халĕ ЧЕРКАССЫ хули патне пымалли вырăнсенче çапăçаççĕ.

Верховный Главнокомандовани приказĕ тăрăх, пирĕн çарсем, хăйсем йышăнса тăракан позицисем лайăх пулман пирки, Житомир хулине хăварнă та лайăхрах оборона рубежĕсем йышăннă.

РЕЧИЦА хули районĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 145 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 10 самолетне персе ÿкернĕ

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем малалла вирлĕн куçса пырса, Овруч хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ. Овруч хулишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах 4-мĕш гвардейски сывлăш десант дивизийĕн чăçĕсем ăнăçлă çапăçнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче—чугун çул эшелонĕсем, артиллери нумай, боеприпассен тата тĕрлĕ çар япалисен склачĕсем. Пирĕн çăмăллăн куçакан чăçсем, тăшмана хăваласа пырса, халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче гитлеровецсене икĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Черкассы хули енче пирĕн çарсем ăнăçлăн Днепр шывĕ урлă каçнă. Шыв урлă каçма Днепр шывĕн сылтăм енне самолетсем çинчен пăрахнă совет подразделенийĕсем пулăшнă. Çав подразделенисем партизансемпе пĕрле нимĕçсене сасартăк пырса çапнă. Тăшман хăраса çухалса кайнипе усă курса, пирĕн чăçсем Днепр урлă хăвăрт каçнă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ чылай пункчĕсене тытса илнĕ. Тăшман, хăйĕн малтанхи позицийĕсене каялла туртса илессишĕн пулса, çав татса кĕнĕ вырăна çывăхри мĕнпур резервсене те илсе пынă; анчах та хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем тăшмана каялла ывăтса янă. Нимĕçсене хĕссе пырса, вĕсем Черкассы хули патне пыракан вырăнсенче çапăçнă. Тăшмана пысăк çухату кÿнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмĕшпех юсавлă 5 танк, 2 бронетранспортер, 18 тупă, 80 пулемет, 100 автомашинăна яхăн, 3 боеприпас склачĕ, хĕçпăшал, продовольстви склачĕсем тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пĕр участокра нимĕç пехотин пĕр роти пĕтĕмĕшпех тыткăна параннă.

* * *

Речица хули районĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Тăшман васкаса пысăк вăйсем куçарса пынă, темиçе хутчен те контратака тунă. Совет артиллерисчĕсем, пехотинецсем тата танкистсем нимĕçсен контратакисене пурне те сирсе янă, тăшмана пысăк çухату кÿнĕ. Пĕр участокра кăна 800 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 19 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, пĕр бронепаровоз тата темиçе артиллери батарейи пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри боецсем нимĕçсем Германие каторгăллă ĕçе хăваласа каякан совет гражданĕсен пысăк ушкăнне ирĕке кăларнă. Çавăн пекех тата тăшманăн çар пурлăхĕ турттарса пыракан обозне тытса илнĕ.

* * *

Тарнополь облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ октябрь уйăхĕнче тăшманăн 33 çар эшелонне, 2 бронепоездне ÿпĕнтерсе янă тата чугун çул кĕперне сирпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче гитлеровецсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ е амантнă. Пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, партизансем нимĕçсен 2 самолетне ÿкернĕ.

Ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсем партизансен пĕр отрядне хирĕç пысăк карательнăй экспедици янă. Икĕ кун хушши пынă çапăçусенче совет патриочĕсем тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Партизансем пĕр миномет, 18 пулемет, 60 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Днепропетровск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелрехре, Най-Вег тата Веселая Долина ялĕсенче, СС «Аслă Германия» ятлă танковăй дивизийĕнчи пĕр ушкăн салтака тыткăна илнĕ. 2-мĕш гренадерски полкри тыткăна лекнĕ Вернер Хенер, Генрих Кюпен унтер-офицерсем тата Гельмут Линдеман салтак çапла каласа панă: «Нимĕç командованийĕ пирĕн дивизи çине питĕ хытă шанса тăнă. Ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче дивизири пур полксене те çынсем хушса пачĕç. Дивизи умне çакăн пек задача лартрĕç: танковăй тата пехотнăй соединенисемпе пĕрле çапăçса, вырăссене Днепр шывĕн сулахай енне ывăтса ямалла. Питĕ хаяр çапăçусем пулса иртрĕç. Пире питĕ пысăк çухату кÿчĕç. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пирĕн полкри ротăсенче мĕн пурĕ те 10—15-шер çын кăна тăрса юлчĕ. Çав тери пысăк çухатусене пула 2-мĕшпе 3-мĕш батальонсенчен пĕр батальон турĕç. Темĕн чухлĕ тăрăшсан та, дивизи вырăссене ывăтса яма пултараймарĕ, унăн хăйĕн каялла чакмалла пулчĕ. Салтаксем çапла калаççĕ: «Çакăн пек тата тепĕр икĕ çапăçу пулсан, «Аслă Германия» дивизийĕ пачах пĕтсе ларать», теççĕ.

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Запорожье облаçĕнчи Ново-Васильевка ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Каялла чакас умĕн нимĕçсем, персе пăрахассипе хăратса, ялти мĕн пур халăха хăйсен тылне куçма хушрĕç. Совет гражданĕсем хăйсене нимĕç чуралăхне хăваласа каясран пытанса юлма тăрăшрĕç. Ялти халăх çесенхире тарса пĕтрĕ, сад пахчисемпе çырма-çатрасене тарса пытанчĕ. Гитлеровецсем пур çĕрте те чупса шыраса çÿрерĕç, тупнине-пĕрне вĕлерсе пычĕç. Ялти халăха нумайĕшне персе пăрахрĕç. Фашистла вăрă-хурахсем 700 пÿрте çунтарса ячĕç, хаклă пурлăха йăлтах çаратса тухрĕç. Темиçе çĕр çемье пÿрт-çуртсăр тăрса юлчĕ. Хăйсемпе илсе кайма пултарайманнине нимĕçсем йăлтах пĕтерсе тăкрĕç. Вĕсем 5 арман, çу çапакан 2 завод, электростанци, МТС, район больницине, амбулаторие, 5 шкул тата ытти çуртсене те çунтарса ячĕç. Ылханлă нимĕçсене нимĕн хĕрхенмесĕр хаяррăн тавăрма тупа тăватпăр эпир. Хĕрлĕ Çар боецĕсенчен фашистла бандитсем тунă мĕнпур усал ĕçсемшĕн хаяррăн тавăрма ыйтатпăр».

Акт çине алă пуснă: учительницăсем—Мария Юрченко тата Екатерина Потяко, колхозниксем—Василий Андреев, Федосия Попова, Илларион Наумов, Иван Степанов, Василий Попов, Троицки чиркÿри священник Петр Чирва тата ялти ытти çынсем те.

А. Я. Вышинский юлташ Алжира тухса кайни

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ хăйпе пĕрле каякан çынсемпе пĕрле ноябрĕн 18-мĕшĕнче Мускавран ют çĕршывсене тухса кайнă. Вăл унта Итали ĕçĕсем пирки виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕн решенийĕ тăрăх тунă Консультаци Советĕнче Совет правительстви представителĕ пулса ĕçлеме кайнă. (ТАСС)

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче çĕнтерÿ тăвассишĕн нимĕн те шеллесе тăмастпăр

„Çĕршыва тырпул кирлĕ, ăна эпир паратпăр"

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем тăван çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокчен пурнăçа кĕртрĕ.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă доклад колхозниксене çĕнĕ вăй-хăват пачĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ чĕнĕвне ответлесе, государствăна 8.400 пăт тырă сутма йышăнчĕç. Çĕршывпа фронта тырпул кирлĕ, эпир ăна çителĕклĕ паратпăр, теççĕ колхозлă ялти çулăмлă патриотсем.

«Марс» колхоз членĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсен тыррине государствăна сутма пулаççĕ. Колхоз правлени председателĕ Гаязов юлташ иртнĕ çулта хăй перекетлесе усранă 105.000 тенкĕ укçана Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники тунă çĕре пачĕ. Унсăр пуçне вăл государствăна 30 пăт тырă панă. Гаязов юлташ фронтшăн пулсан нимĕн те шеллемест. Вăл халĕ государствăна 50 пăт тырă сутать.

— Çĕршывпа фронта тырă кирлĕ, —тет Гаязов юлташ.—Апла пулсан пирĕн перекетлĕрех пулмалла. Çĕнтерÿ тума мĕн кирлине çителĕклĕ тăрăнах парса тăмалла. Çакна эпир, колхозниксем, ялан асра тытатпăр.

Гаязов юлташ примерĕпе Салахиев юлташ государствăна тырă 35 пăт, колхозник Алеев 15 пăт сутма пулчĕç. Нумай колхозниксем 6—10-шар пăт сутаççĕ.

«Марс» колхоз колхозникĕсем республикăри колхозниксене хăйсен примерĕне государствăна тырă сутма сĕнеççĕ.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз колхозникĕсен патриотла пуçарăвне йышăнăр! Государствăна тырă сутса, фашистла йытăсене çĕмĕрсе тăкма мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшăр!

Кольцовка колхозникĕсем государствăна 792 пăт тырă сутрĕç

ВАРНАР, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Сталин юлташ ĕççынни депутачĕсен Мускав хула совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада итленĕ хыççăн фронта пулăшассишĕн татах та тимлĕнрех ĕçлеме тупа турĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Халĕ колхозра çитес çулта тухăçлă тырпул туса илме хатĕрленес тĕлĕшпе ăмăрту саралса пырать.

Колхозниксемпе колхозницăсем фронта ытларах пулăшас шутпа, хуçалăхра перекетлесе усранă 792 пăт тырра хĕрлĕ обозпа государствăна кайса сутрĕç. Колхозниксем çĕнтерÿшĕн пулсан нимĕн те шеллеместпĕр, теççĕ.

Государствăна тырă сутасси ытти колхозсенче те саралса пырать.

Колхоз хресченĕсен пулăшăвĕ

КАЛИНИНО, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра государствăна тырă сутакансен йышĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз государствăна 10.000 пăт, Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз—3.000 пăт, Кÿлхĕринчи «Трактор» колхоз—8.000 пăт тата Мачамăш колхозĕ — 1.500 пăт сутнă.

Государствăна тырă сутса колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿ тума пулăшаççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Çулпуçăн çулăмлă сăмахĕсене кашни ĕççынни патне çитерер

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Сталин юлташăн докладне ăнлантарса памашкăн партипе совет активĕ ялсене тухса кайрĕ.

Ярапайкасси ялсоветĕнчи колхозсенче ĕнер пухусем пулса иртрĕç. Унти колхозсем пурте аслă Октябрь уявĕ тĕлне ялхуçалăх çулĕн ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç. Халĕ колхозниксем, Сталин юлташăн сăмахне ĕçпе ответлесе, çитес çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Вĕсем пурте çителĕклĕ таран вăрлăх хатĕрленĕ, халĕ ăна тимлесех сортлаççĕ.

Кипечкасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхозра агитатор Чигаркин юлташ колхозниксене Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

— Сталин юлташ пирĕн иртнĕ çулхи ĕçсене тивĕçлипе хакларĕ. Малашне те вăйлă тырпул туса илессишĕн, фронта пулăшассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер, — теççĕ колхозниксем. Вĕсем кăçал ялхуçалăх ĕçне ăнăçлăн вĕçлесе, государство умĕнчи пур обязательствăсене те чыслăн пурнăçланă, çитес çулхи çураки валли çителĕклĕ таранах вăрлăх сортласа хунă.

Васликасси ялсоветĕнчи «Родина» колхозри комсомолецсем Сталин юлташăн докладне колхозниксене ăнлантарса панă çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Çавăнпа унти колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ ÿсрĕ. Колхоз 1944-мĕш çулшăн государствăна аш-какай памалли плана 87 процент тултарнă, çитес çулшăн 1.700 литр сĕт панă, сĕс-кантăр обязательствине пурнăçланă, вăрлăх фондне хывса çитернĕ. Халĕ комсомолецсем вăрлăхсене сортлас, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçсене пуçарса пыраççĕ.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ăнлантарса парас ĕç кашни колхозрах пысăк çĕкленÿпе пулса пырать.

В. ГУСЬКОВ.

Çирĕмкунлăха хутшăнчĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Яманакри «Красное Сормово» колхоз членĕсем Сталин юлташăн доклачĕпе приказне хавасланса кĕтсе илчĕç. Вĕсем, умра тăракан ĕçсене вăхăтра пурнăçлас тесе, çуракине хатĕрленме халех тытăнчĕç.

Çавăн пекех колхозра ятарласа фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд турĕç. Çав фонд валли 60 пăт çăнăх, 18 пăт кĕрпе уйăрса хунă. Ку ĕç малалла пырать.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Пурăнмалли çуртйĕр тата коммуналлă предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ, пурăнмалли çуртйĕр тата коммуналлă предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕмĕрлери коммунальнăй прачечнăй, Çĕмĕрлери парикмахерски хуçалăхĕ, Улатăрти парикмахерски хуçалăхĕ тата Шупашкарти коммуналлă хуçалăхăн обозĕ мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕмĕрлери коммуналлă прачечнăйĕнчех (директорĕ Глыбышев, коммуналлă хуçалăх заведующийĕ Анишков юлташсем) хăвармалла тунă тата ăмăртура палăрнă рабочисене премилеме 5.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Çĕмĕрлери парикмахерски хуçалăхне пĕрремĕш преми — 3.000 тенкĕ памалла тунă.

Улатăрти парикмахерски хуçалăхне тата Шупашкарти коммуналлă хуçалăх обозне иккĕмĕш преми — 2.000-шер тенкĕ памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрь уйăхĕнче Улатăр тата Çĕнтĕрвăрри хулисенчи çуртйĕр управленийĕсем хăйсен ĕçне лайăхлатнине палăртнă.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ вăрман хатĕрлесе турттарас ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстерес, чугун çулпа промышленность предприятийĕсем тата хуласем валли топливо çителĕклĕ хатĕрлес шутпа ноябрĕн 20-мĕшĕпе декабрĕн 20-мĕшĕ хушшинче фронтовой уйăхлăх ирттерме йышăннă.

Вăрман хатĕрлевĕ фронтпа халăх хуçалăхĕн кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чугун çулсем фронта хĕçпăшалсемпе огнеприпассем, апат-çимĕçсемпе тумтирсем тата ытти япаласем вăхăтра турттарса пычччăр тесен, вĕсене валли вутă çителĕклĕ хатĕрлесе памалла. Промышленность тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине пурне парса тăтăр тесен, ăна йывăç материалĕсем тата топливо кирлĕ таран тăратмалла. Учреждениесемпе организацисем ăнăçлăн ĕçлесси те топливо çителĕклĕ пулнинчен чылай килет. Çавăнпа ĕнтĕ вăрман хатĕрлесси питех те кирлĕ тата ответлă ĕç пулса тăрать.

Пирĕн республикăри вăрман хатĕрлекен организацисем фронтпа халăх хуçалăхне йывăç материалĕсем тата топливо тăратас тĕлĕшпе сахал мар çитĕнÿсем турĕç. Йĕпреçри тата Вăрнарти вăрманпромхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлес плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе вырăнти топливо промышленноçĕн Канашри, Вăрмарти, Советскинчи, Элĕкри тата ытти вăрманпромхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Вăрман хатĕрлес ĕçе республикăри вуншар колхоз активлăн хутшăннă.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕ. «Анчах,—тенĕ Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра,—совет çыннисем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанма вĕренмен. Лăпланса ларма тытăнсан, çĕнтерĕве аларан вĕçертме пулать. Çапăçмасăр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ. Çĕнтерÿ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла илес тесен, çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ».

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ кăтартса панисене пурнăçа кĕртессишĕн совет çыннисем çĕнĕ хастарлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те социализмлă ăмăрту çĕнĕ вăйпа çĕкленсе пырать. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсем те аякра тăмаççĕ. Буинскинчи вăрманпромхоз коллективĕ, Сталин юлташ доклачĕпе хавасланса, чугун çул валли вутă хатĕрлес плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, 1943 çулхи вăрман хатĕрлесе турттармалли плана декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртме пулнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлес плана декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарса çитерессишĕн колхозсемпе бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçарнă. Пинер вăрман пунктĕнчи рабочисем ĕç тухăçлăхне кунран кун ÿстерсе пыраççĕ. Иккĕленмелли çук, республикăри ытти вăрманпромхозсемпе районсем те фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăнса çитĕнÿсем тăвĕç.

Вăрман хатĕрлесе турттарас плана ăнăçлăн тултарас енĕпе иртекен фронтовой уйăхлăхра пирĕн ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе, плана кунран кун ирттерсе тултармалла тăвас пулать. Çитменлĕхсем сахал мар-ха. Чылай вăрманпромхозсем хăйсен планне ăнăçлăн тултараймаççĕ, чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче начар ĕçлемеççĕ. Ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене эпир кĕске вăхăтрах пĕтерме пултаратпăр. Ăна тума пирĕн пур майсем те çителĕклĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ фронтовой уйăхлăх ирттерессине лайăх организацилеме татăклă кăтартусем пачĕç. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен тата вăрман хатĕрлекен организацисен, чи малтан, вăрманта ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ мобилизацилемелле. Çакна тума колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче Сталин юлташ докладне анлăн ăнлантарса пани, культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатни кирлĕ.

Вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран мобилизацилени ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна-ха. Партипе совет тата вăрман хатĕрлекен организацисен колхозниксемпе колхозницăсене тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла. Апат-çимĕç, суту-илÿ ĕçне лайăх йĕркелес пулать, пурăнмалли çуртсенче йĕркелĕх тумалла, культурăллă-массăлла ĕçе лайăх организацилемелле.

Вăрман хатĕрлекен организацисен, механизмсемпе туллин усă курассишĕн тăрăшнипе пĕрлех, рабочисем валли ĕç инструменчĕсем кирлĕ таран тупса парасси, вĕсене техника тĕлĕшĕнчен пулăшасси çине хытă çаврăнса пăхмалла. Бригадăсемпе рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатмалла. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен кашни колхозник тата колхозница ĕç нормине тултарса ĕçлемелле тăвас пулать.

Варман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăхра фронтри пек ĕçлер, фронтпа халăх хуçалăхне йывăç материалĕсемпе топливо çителĕклĕ тăратар!

Укерчĕк çинче: ефрейтор-зенитчик А. Александров юлташ. Вăл Шăхасан районĕнчи Атнашри Киров ячĕллĕ тăракан колхозра ытти колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ. 1941 çулхи июль уйăхĕнчен вăл фронтра орудин наводчикĕ пулса çапăçать. Пĕр çапăçура нимĕçсен 9 самолетне персе ÿкернĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Совет правительстви Александров юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

ÇУРАНИНЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ЙШЛЕИ. Кипечкасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз çитес çулхи çуракине акма вăрлăхсене уйăрса хучĕ. Тасатса сортланă вăрлăха пĕтĕмпех районри лабораторире шăтарса пăхса тĕрĕслеттернĕ, вăрлăхсем паха кондициллĕ пулни курăннă.

Çавăн пекех «1-ое Мая», «Акара», «Труд», «Коммунист», «Мотор», «Красные Яуши» колхозсем те вăрлăх фончĕсене хывса çитерчĕç, сортласа хучĕç.

Районри колхозсенче райçĕрĕç панă «Триер» йышши сортировкăсем 12 пур. Вĕсенчен 11-шĕ халĕ юсавлă, ĕçлеççĕ. Пĕр сортировка «Янду» колхозра çĕмрĕк ларать, анчах ăна çитес кунсенчех юсаса ĕçе яраççĕ. Кашни машина çумнех ĕçлеме пĕлекен колхозниксене çирĕплетнĕ, колхозран колхоза çÿреме маршрутсем туса панă. «Красные Яуши» колхозăн машини халĕ иккĕмĕш колхозра ĕçлет. Кунпала колхозник Павлов юлташ çÿрет. Вăл машинăна таса та юсавлă тытать, çавна пула вăл машинăпа кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. «Большевик», «Броневик» колхозсен машинисемпе виçшер колхоза тырă сортласа панă.

Водопьянов тата Каганович ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăх тасатма колхозри пур майсемпе те усă кураççĕ. Ку колхозсем вăрлăха «Триумф» сортировкăсемпе тасатса хучĕç.

В. ГУСЬКОВ.

ВЛКСМ Обкомĕн пленумĕ

Ноябрĕн 18—19-мĕшĕсенче, Шупашкарта, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум виçĕ ыйту: комсомол организацийĕсем государствăна тырă сутас ĕçе хутшăнса ĕçлесси, политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе мĕнле туса пыни тата комсомол организацийĕсен шкулти ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа пленум ВКП(б) Обком секретарĕн Белков юлташăн докладне итлерĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче колхоз хресченĕсем Хĕрлĕ Çара — апат-çимĕçсем, промышленноçа — чĕртаварсем ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçленине палăртса, малашнехи задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем фронтра çĕнтерÿ тăвас тесе нимĕн те шеллесе тăмаççĕ. Вĕсем государствăна тырă памалли плана тултарнă хыççăн, фронта ытларах пулăшас шутпа, государствăна тырă сутма тытăнчĕç. Çак ĕçе лайăх организацилес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсен те тимлĕн ĕçлемелле.

Государствăна тырă сутас ĕçе ăнăçлăн ирттерес тесе, пленум комсомол организацийĕсене колхозниксем хушшинче çак тĕлĕшпе политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пыма хушрĕ. Ку ĕçре комсомолецсен хăйсен пример кăтартмалла. Çавăн пекех пленум ВЛКСМ райкомĕсемпе комсомол организацийĕсене государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктĕсене леçмешкĕн хĕрлĕ обозсем организацилеме хушса хăварчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл комсомолецсем политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе мĕнле хутшăнни çинчен чарăнса тăчĕ.

Республикăри комсомол организацийĕсем ĕçсыннисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе сарас тĕлĕшпе чылай вăй хурса ĕçленĕ. 6.573 комсомолец агитаторсем, 317 комсомолец вулав çурчĕн заведующийĕсем, 2.707 комсомолец боевой листоксемпе стена хаçат редакторĕсем пулса ĕçлеççĕ. Комсомолецсен вăйĕпе кăна уборка вăхăтĕнче 59.124 доклад тата калаçусем ирттернĕ. 24.688 номер боевой листоксем тата стена хаçачĕсем кăларнă, художествăллă пултарулăх кружокĕсен выступленийĕсене 859 хутчен ирттернĕ. Анчах та çакă вăл çителĕксĕр-ха. Райкомолсемпе горкомолсем тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем çамрăксене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе тата вĕсене культура ĕçне явăçтарас енĕпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Уйрăм райкомолсен секретарĕсем комсомолец-агитаторсене ĕçре пулăшса пымаççĕ, комсомолăн чылай руководителĕсем хăйсен политикăпа культурăллă пĕлĕвне ÿстерессишĕн тăрăшмаççĕ. ВЛКСМ Обкомĕ те райкомолсемпе горкомолсене çав çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе кирлĕ пек пулăшмасть.

Хăшпĕр комсомол организацийĕсем (Элĕк, Красноармейски) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Красноармейски, Йĕпреç, Ишлей райкомолĕсен секретарĕсем тата комсомол активĕ çамрăксем хушшинче политикăллă докладсем сайра хутра çеç тăваççĕ, политикăллă-массăллă ĕçе хуçалăх ыйтăвĕсемпе сыхăнтарма пĕлмеççĕ.

Предприятисенчи комсомол организацийĕсем (Улатăрти паровозсем юсакан, Канашри вагонсем юсакан тата ытти заводсенче те) çамрăк рабочисене производство ĕçне вĕрентес, вĕсене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Канашри, Куславккари, Шупашкарти ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем хушшинче те политикăлă воспитани ĕçĕ начар пулса пырать.

Пленумра тухса калаçакансем райкомолсемпе горкомолсем наглядлă агитацие хакламаннине, пионерработниксене пулăшманнине, художествăллă пултарулăх смотрĕсене ирттересси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхманнине палăртрĕç.

Пленум ВЛКСМ Обкомĕн бюровне, горкомолсемпе райкомолсене çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе, мĕнпур агитациллĕ-массăллă тата культурăллă ĕçе Сталин юлташăн вăрçă вăхăтĕнче тунă доклачĕсемпе приказĕсем тăрăх туса пыма хушса хăварчĕ.

Виççĕмĕш ыйтупа комсомол организацийĕсен шкулсенчи ĕçĕсем çинчен ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ доклад турĕ.

Пленум шкулсем кăçалхи вĕренÿ çулĕнче всеобуч законне мĕнле пурнăçласа пынине тишкерсе тухрĕ. Елчĕк, Çĕрпÿ, Элĕк, Красноармейски, Сĕнтĕр районĕсенчи тата Канаш хулинчи шкулсем всеобуч законне пĕтĕмĕшпех пурнăçлаçă. Республикăри комсомол организацийĕсем ачасене пулăшмалли фонда 48.975 тенкĕ укçа, 1.528 пăт ялхуçалăх продукчĕсем пухнă.

Анчах та уйрăм районсенче (Пăрачкав, Шăмăршă, Етĕрне, Улатăр Сĕнтĕрвăрри, Тăвай) шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарман-ха.

Пленумра тата комсомол организацийĕсем пионер организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине, вĕренекенсене комсомола илесси начар пулса пынине палăртрĕç. Уйрăмăнах хăшпĕр детдомсемпе детприемниксем (Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар) вĕрентÿпе воспитани ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Пленум комсомол организацийĕсен шкулсенчи ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе практикăллă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Пленумра Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕнчен килнĕ делегатсем пулчĕç.

Юлашкинчен пленум республикăри комсомолецсен ячĕпе хамăрăн шефа илнĕ Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕнчи краснофлотецсем патне саламлă çыру ячĕ.

Ют çĕршывсенче

США конгресĕнче Хэлл тухса калана сăмах

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран Хэлл сăмахне панă. Хэлл вăл сăмаха США конгресĕн сеначĕпе представительсен палатин пĕрле тунă ларăвĕнче тухса калана. Хэлл çапла калана:

«Пирĕн, кунта ларакансен, тата пĕтĕм çĕршыври темиçе миллион американецăн, çавăн пекех тата тинĕс леш енче хăйсен боевой вырăнĕсенче тăракан американецсен те хальхи вăхăтра пĕр шухăш çеç тата çав пĕр шухăш кăна пулма пултарать те, вăл шухăш—тăшмана часрах çĕнтересси. Эпир вăрçăра çакăн пек тапхăра çитрĕмĕр ĕнтĕ: халĕ пĕрлешÿллĕ нацисем тĕнчен мĕнпур пайĕсенче наступлени тăваççĕ. Пирĕн тăшмансем поражени хыççăн поражени тÿсеççĕ. Вăхăт çитĕ, вĕсем тĕнчене пăсма тăрăшнине татăклăн çапса хуçăпăр. Анчах та пирĕн питĕ пысăк испытанисем, калама çук пысăк жертвăсем тÿсмелле пулать. Эпир Америкăра тата мĕнпур пĕрлешÿллĕ нацисем хамăр тăшмантан вăйлăрах пулнипе мĕн тери вĕçне çитиччен тата пĕр пăркаланмасăр усă курăпăр, тăшмана çĕнтерес вăхăта çавăн чухлĕ хăвăртлатăпăр».

«Мускаври конференци, — тенĕ Хэлл, — вăрçа часрах пĕтерес тĕлĕшпе те, малашнехи пурнăçа йĕркелесе ярас тĕлĕшпе те паха утăм туни пулса тăчĕ.

Рузвельт, Черчилль тата Сталин çакна çирĕп ĕненсе тăнă: вăрçăн хальхи тапхăрĕнче виçĕ правительствăн ответлă представителĕсем вăрçă хыççăнхи ыйтусем тăрăх, çавăн пекех тата вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес ыйтусем тăрăх та пĕр-пĕринпе уççăн та туслăн калаçса илни питĕ кирлĕ. Çакна ĕненсе, вĕсем вара çав конференцие пухнă. Халиччен пирĕн правительствăпа Великобритани правительстви пĕр-пĕринпе темиçе хут та калаçса илнĕ, анчах, вăрçă условийĕсене пула, Совет правительстви çавăн пек калаçусене çавăн чухлех хутшăнайман».

«Мускаври канашлура, — тенĕ Хэлл, — темиçе ыйтăва сÿтсе-явнă. Паха ыйтусем тĕлĕшпе калаçса татăлнă, анчах вăрттăн килĕшÿсем туман, ун пек килĕшÿсем тума та шутламан. Конференцире вăрçă ыйтăвĕсене сÿтсе-явни çинчен çапла калама пулать: унăн задачи—пĕрлехи тăшмана хирĕç туса пыракан вăрçăра виçĕ çĕршыв пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине çăмăллатасси тата вăйлатасси пулнă. Тăшмана çĕнтерес тĕлĕшпе мĕнле нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе халăхĕсем пуринчен ытларах ответлă пулса тăраççĕ, çав нацисем малашнехи пурнăçăн йышлă та йывăр ыйтăвĕсене ытти нацисемпе пĕрле сÿтсе-явас ĕçе туллин хутшăнма пултарччăр тесе тăрăшрĕ конференци. Конференцире яланах çакăн пек шухăш пуçпулса тăчĕ: тăшмана çĕнтерни хыççăн мире юратакан халăхсем хăйсен пĕрлехи чи паха интересĕсене хÿтĕлемешкĕн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени, хальхи вăхăтра вăрçăра пулăшса пынă пекех, кирлĕ те паха ĕç пулса тăрать.

Çапла шухăшласа, Мускаври конференцире тăватă çĕршывăн декларацине йышăннă, çав декларацие эсир лайăх пĕлетĕр». Çав декларацире çапла калана: вăрçă пĕтнĕ хыççăн тăватă правительство ытти государствăсен территорийĕсенче хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе усă курмасçĕ, пĕрле канашласа илнĕ хыççăн тата çак декларацире кăтартнă тĕллевсене пурнăçламашкăн кăна вĕсемпе усă кураççĕ, тенĕ. Çапла калани вăл тăватă правительство «хăйсен правине хăйсем катни» пулса тăрать, тенĕ Хэлл. Çав декларацие йышăннипе, — тенĕ вăл, — СССР, Великобританипе Пĕрлешÿллĕ Штатсем тата Китай вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме никĕс хывса хăварчĕç. Çапла килĕштерсе ĕçлени вăл мире юратакан мĕнпур çĕршывсене—пысăккисене те, пĕчĕккисене те—мирлĕ тата хăрамасăр пурăнма, хăйсен ирĕклĕхĕсене тата цивилизациллĕ пурăнас правине сыхласа хăварма, экономика, общество тата пĕлÿ тĕлĕшĕнчен малалла аталанса пымашкăн ĕлĕкхинчен ытларах ÿсĕ майсемпе усă курма май парĕ... Мускавра тăватă правительство тĕнчери çĕршывсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеттермелли анлă та прогреслă программăна пурнăçа кĕртсе пыма сăмах пачĕç. Çакă вăл пĕтĕм тĕнчешĕн паха. Тăватă çĕршывăн декларацийĕнчи пунктсене пурнăçа кĕртсе пынă май, халĕ ĕнтĕ тĕрлĕ çĕршывсен вăйĕсене пĕр шайлă тытса тăмашкăн союзсем тума е ятарласа мĕнле те пулсан урăх килĕшÿсем тума кирлĕ пулмасть. Çĕршывсем иртнĕ вăхăтра, хăйсен хăрушсăрлăхне сыхласа хăварас тесе е хăйсен интересĕсене пурнăçа кĕртес тесе, çавăн пек майсемпе усă курнăччĕ.

Конференци умĕнче Европăри вăрçă ĕçĕсем пирки тухса тăнă политика ыйтăвĕсем нумай тăнă. Эпир çакна шута илтĕмĕр: пирĕн виçĕ правительствăна интереслентерекен ыйтусем вĕсем, тăшмана çĕнтересси хăвăртланнăçемĕн, малашне те тухатуха тăрĕç. Темиçе правительство, яланхи дипломатиллĕ майсемпе çеç усă курса, çавăн пек ыйтусем тăрăх пĕр-пĕринпе час калаçса татăлма, тата пĕр-пĕрне час ăнланса илме пултарайрас çук. Çавăнпа конференци Европăри Консультаци комиссине тума шут тытрĕ, çав комисси Лондонра ĕçлемелле.

Италия парăннă условисене пурнăçа кĕртсе пынă май тата çав çĕршывра событисем аталанса пынă май тухса тăракан ыйтусене татса памашкăн конференци Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен Консультаци совечĕ туса хучĕ. Çав совета Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин, Совет Союзĕн, Югославипе Греци правительствисен тата француз халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн представителĕсем кĕреççĕ. Çав совета çитес вăхăтрах йĕркелесе ярĕç. Çав икĕ органа вĕсене виçĕ правительство хушшинчи яланхи дипломатиллĕ каналсем вырăнне пулччăр тесе туса хуман, çакна, ăна тĕплĕн палăртса хунă. Ку çеç те мар. виçĕ правительствăна интереслентерекен ыйтусене часрах тата лайăхрах татса памашкăн виçĕ столицăран пĕринче, кирек хăшинче те, виçĕ правительство дипломатиллĕ майпа калаçма пултарччăр тесе мерăсем йышăннă.

Конференцин Италипе Австри синчен йышăннă декларацийĕсем çинчен калана хыççăн Хэлл малалла çапла калана: «Конференцие пула виçĕ правительствăн руководителĕсем — оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсем тĕлĕшпе—пур расăсем тата пур тĕрлĕ тĕн тытакансем тĕлĕшпе, пуринчен ытла еврейсем тĕлĕшпе нацистсен пуçлăхĕсем тунă тискер ĕçсемшĕн ответлă пулса тăракан çынсем пирки деклараци йышăнчĕç. Çав преступленисене тунă çынсене тивĕçлипе ответ тыттарăпăр. Юлашкинчен, конференци вăрçă тапхăрĕнчен мирлĕ тапхăра куçас ыйтусем тĕлĕшпе малтанлăха калаçса илчĕ. Çакăн пек ыйтусем çинчен ăнăçлăн калаçнă: Германипе унăн хÿрешкисене мĕн тăвасси çинчен, экономика çыхăнăвĕсен тĕрлĕ тапхăрĕсем çинчен, халăхсен пурнăçне лайăхлатасси çинчен, пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăхпа мир туса хурасси çинчен. Çав ыйтусене татса пани Мускаври конференцин питĕ пысăк çитĕнĕвĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Икĕ эрне хушши активлăн сÿтсеявса, эпир хамăр умра тăракан мĕнпур ыйтусене татса параймăн, татса пама та пултарайман. Малашне кунран-кун, çултан çул тухса тăрас ыйтусене те эпир малтанах палăртса хума пултарайман. Ытти ыйтусем те, сăмахран, чикĕсем тĕлĕшпе тăракан ыйтусем те пулнă, çавăн пек ыйтусене, паллах ĕнтĕ, вăрçă ĕçĕсем пĕтиччен хăвармалла. Çапла туни вăл пирĕн правительствăн позицийĕпе килĕшсе тăрать. Пуринчен те пахарах ĕç çакă пулса тăчĕ: конференцире тĕнчери çĕршывсем хальхи вăхăтра тата вăрçă хыççăнхи тапхăрта пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес шухăш-кăмăлсене çĕнĕрен чĕртсе янă, çакă вăл ĕçре те палăрчĕ.

Эпĕ Мускавра канашланă çынсене тивĕçлипе хаклама май пуррăн савăнатăп. Молотов конференцин кун йĕркине питĕ лайăх хатĕрлесе хунă. Конференцин председателĕ тата участникĕ пулса, вăл питĕ пысăк пултарулăх тата тĕнчери ĕçсене питĕ лайăх пĕлнине кăтартрĕ. Иден, калама çук ăслăскер тата пысăк опытлăскер, государство деятелĕн чи лайăх енĕсене кăтартса пачĕ. Эпĕ Сталин Маршала питĕ чаплă çын, пирĕн ăру вăхăтĕнчи чи чаплă государство дятелĕсемпе пуçлăхĕсенчен пĕри тесе шутларăм. Вырăс халăхĕ тата унăн чаплă патриотизмĕ мана питĕ тĕлĕнтерчĕç. Тискер агрессие хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен çынсем çине, Совет Союзĕнчи арçынсемпе хĕрарăмсем çине мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем хĕпĕртесе ырă кăмăлпа пăхмалла.

Пирĕн çинчен, хальхи ĕмĕрти çынсем çинчен, малашне çакăн тăрăх вывод тăвĕç: эпир хамăрăн халиччен пулман задачăна—вăрçăра çĕнтерес, тата малашнехи мирпе хăрушсăрлăха туса хумашкăн килсе тухнă лайăх майсемпе усă курмасăр юлас мар задачăна мĕнле пурнăçлани тăрăх вывод тăвĕç. Эпĕ, американец пулса тăрса, эсир, лэдисемпе джентльменсем, ĕçсем çине çав тери анлăн пăхнипе тата государство ĕçĕсене çав тери лайăх ăнланнипе мухтанатăп; ĕçсем çине çавăн пек пăхнипе тата государство ĕçĕсене çавăн пек ăнланнипе пула Эсир конгресăн икĕ палатинче те, кам мĕнле партире тăнине пăхмасăр, резолюцисем йышăнтăр; çав резолюцисенче пирĕн çĕршыв ытти ирĕклĕ нацисемпе пĕрле мирпе хăрушсăрлăха сыхласа хăвармашкăн тĕнчери çĕршывсемпе пĕрле ĕçлемелли çинчен калана».

ИТАЛИРИ ВĂРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕпе Америкăн 5-мĕш армийĕн фрончĕсенче патрульсем вăйлăн çапăçнă.

Хăшпĕр участоксенче союзниксен позицийĕсем çине тупăсемпе вăйлăн персе тăнă.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Римран 80 мильăра тăракан Гроссето çине тата Римран 50 мильăра тăракан Терни тавар станцийĕсемпе çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АМЕРИКАН «ВĔÇЕКЕН КРЕПОСТЬ» ЙЫШШИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕН ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем çулталăк хушшинче Çурçĕр Африкăра тăшманăн 1.348 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Тăшманăн Çурçĕр Африкăри тата Европăри объекчĕсем çине 26.100 тонна бомба пăрахнă. Çав ĕçсене тунă чухне 87 «Вĕçекен крепость» пĕтнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕплĕн пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Берлин тата Людвигсхафен хулисене пырса тапăннă. Летчиксем пысăк пушарсем тухнине тата взрывсем пулнине курнă. 32 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Çурçĕр Францири çар объекчĕсене тапăннă. Америка бомбардировщикĕсем Германин Норвегири самолетсем юсакан тĕп базисене пырса тапăннă, çав базăсем вĕсем Осло хулинчен инçе мар вырăнаçнă.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Афины çывăхĕнчи Элефсин аэродромне тепĕр хут атакăланă. Çав аэродрома нимĕçсем Додеканез утравĕсене тапăнма хатĕрленĕ. Çавăн пекех Афины—Салоники чугун çулĕ çинчи Лариса аэродромне пырса тапăннă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР-ĕнчи предприятисен тата учрежденисемпе организацисен руководителĕсене пĕлсе тăма

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт Управленийĕ автотранспорт кирлĕ пулакан предприятисен тата учрежденисемпе организацисен руководителĕсене çакна пĕлтерет: япаласем турттарма автотранспорт кирлĕ пулсан, малашне тÿрех Автоуправленин Коммерчески эксплоатаци отделĕнчен ыйтмалла (Шупашкар хули, Союзнай ур. 4).

Япаласем турттарма автотранспорт кирлĕ пулсан, заявкисене малтанах парса хумалла, турттарас кун çитиччен сахалтан та 5 талăк малтантарах парса хумалла.

ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИЙĔ. 3—1.

1943 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕнче лаша çухалчĕ. Лаша пĕлĕвĕсем çапла: 1937 çулта çуралнă, кастарнă, çÿллĕшĕ 140 см, тĕсĕ—хăмăр, çамки çинче—шурă тăрăх, çилхи сылтăмалла.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатăп: станция Чебоксары, ж. д. буфету.

Чăвашпотребсоюзăн Учебно-курсовой комбиначĕ 1943 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа сельпосем валли бухгалтерсем хатĕрлекен курс уçать. Курса вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисенчен сахал мар пĕлекенсене илеççĕ. Пуринчен малтан шут ĕçĕпе ученик пулса ĕçленĕ çамрăксене илеççĕ.

Заявленисене илме пуçланă. Вĕсене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Театральная, 1/3, учебный комбинат.

Ĕç резервĕсен управленине çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: снабжени отделĕн начальникĕ, экономист, производствăллă вĕрентĕвĕн старши инспекторĕ, çуртĕсене йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрас ĕçĕн инспекторĕ.

3—1

Шупашкарта лаша çухалчĕ. Пăлисем çапла: ячĕ—«Обозный», кастарнă, 1927 çулта çуралнă, тĕсĕ—çÿрен.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатăп: Чувашская АССР, Шумерлинский район, Магаринский сельсовет Правлению колхоза „Будь готов“.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 287 Типография №. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6, 53 84 п. л. Тираж 14.400 экз.